Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнчепе тухать

108 (7850) № * Юн кун, 2010 ҫулхи раштав (декабрь) уйӑхӗн 22-мӗшӗ * Хакӗ ирӗклӗ

## Кашмаш хӗрӗ тӑрӑшуллӑ



*Ҫамрӑксене – ҫул, аслисене – хисеп. Ҫак принципа тӗпе хума тӑрӑшаҫҫӗ Чӑваш Республикинчи Ҫар комиссариачӗн Муркашпа Элӗк районӗсен пайӗнче. Пысӑк опытлӑ специалистсемпе пӗрлех кунта ҫамрӑксем те тӑрӑшаҫҫӗ, хӑйсен ӑсталӑхне туптаҫҫӗ, япӑх мар ҫитӗнӳсем тӑваҫҫӗ.*

*Эсир сӑн ӳкерчӗкре куракан Татьяна Юрьевна Майорова кунта 2008 ҫултанпа тӑрӑшать. Кашмаш хӗрӗ – пай пуҫлӑхӗн аслӑ пулӑшаканӗ. Ытти ӗҫченсем хушшинче вӑл хисепре. Хӑй водитель пулнӑран техникӑна та питӗ кӑмӑллать.*

**В. ШАПОШНИКОВ сӑн ӳкерчӗкӗ.**

## Малашлӑх тӗллевӗсем паллӑ

Президент Ҫырӑвӗ

Декабрӗн 14-мӗшӗнче Чӑваш Республикин тӑваттӑмӗш суйлаври Патшалӑх Канашӗн черетсӗр 34-мӗш сессийӗ ӗҫлерӗ. Унта ЧР Президенчӗ М.В. Игнатьев республика Патшалӑх Канашне яракан ҫулленхи Ҫырӑвӗпе паллаштарчӗ.

Пирӗн пурнӑҫ ҫултан-ҫул улшӑнса пырать. Ытларах чух лайӑх еннелле. Ҫапах та татса памалли ыйтусем те сахал мар. Ҫавӑнпах ӗнтӗ Президент кӑҫал, пӗлтӗр тунӑ ҫитӗнӳсем ҫинче нумаях чарӑнса тӑмарӗ, чи малтанах кӑҫалхи ҫул халӑхшӑн йывӑр килнине палӑртрӗ. Кусем вӗсем ҫанталӑк шӑрӑх тӑни, республикӑри вӑрмансенче пушарсем алхасни, экономика кризисӗ те витӗм кӳни. Ҫавна май ҫитес ҫулсенче ҫак инкексене хирӗҫ тӑма хатӗр пулни пысӑк пӗлтерӗшлӗ.

Президент хӑйӗн Ҫырӑвӗнче пӗтӗм сферӑна тишкерсе хак пани тата ума ҫӗнӗ задачӑсем лартни питӗ килӗшрӗ. Кунта ҫут ҫанталӑка сыхласси, граждансен экологи яваплӑхне тата культурине ӳстерессин пӗлтерӗшӗ пысӑккине палӑртмалла. Ял хуҫалӑх отраслне аталантарассипе, апат-ҫимӗҫ хӑрушсӑрлӑхне тивӗҫтерессипе татса памалли ыйтусем пур. Ҫӗр ӗҫченӗшӗн ҫӗрпе тухӑҫлӑ усӑ курасси те пӗлтерӗшлӗ тӗллев шутланать.

Ҫамрӑксене ытларах шанмалла тата вӗсене ӗненмелле тесе палӑртни тӗрӗсех. Сӑлтавсӑр чӑрмавсем пулмалла мар. Предприниматель ӗҫхӗлне пуҫӑнассин процедурине ансатлатни кирлӗ. Конкуренци пулмалла. Патшалӑх тата муниципалитет заказне, вӑл шутра социаллӑ пулӑшу ӗҫӗсен заказне конкурс никӗсӗ ҫинче йӗркелесси практикӑламалла.

Республикӑра ӗҫсӗрлӗх шайӗ федерацин Атӑлҫи округӗнче чи пысӑккисенчен пӗри. Ҫавӑнпа та ку енӗпе пирӗн ӗҫлемелли чылай. Ҫак ыйтусене ума кӑларчӗ Президент.

«Таса шыв» тӗллевлӗ программа малалла та пурнӑҫланса пырасса шантарчӗ Михаил Васильевич. Пурӑнмалли ҫурт-йӗрпе коммуналлӑ хуҫалӑхӑн ҫивӗч ыйтӑвӗсем ҫинче те чарӑнчӗ. Бюджет укҫи-тенкипе усӑ курасси те усӑмлӑ та тухӑҫлӑ пулмалли пирки хытах асӑрхаттарса каларӗ.

«Чӑваш Ен вӑйӗ унӑн ҫыннисенче, наци сывлӑхӗ вара ачасем ҫине мӗнле пӑхнинчен килет»,– терӗ Президент. Сывӑ пурнӑҫ йӗркине тытса пырасси, ҫемье ҫирӗплӗхне ӳстересси, спортпа туслӑ пуласси ҫинче чарӑнчӗ. Сывлӑха ачаранах упрама кирлине палӑртрӗ. Республикӑра ача сачӗсем ҫитменнин ыйтӑвне татса парас пулать, ашшӗ-амӑшӗ чӗрӗ ҫинчех ачасем тӑлӑх ӳсни те йӗркеллӗ пулӑм мар.

Республикӑн Вӗрентӳ министерствине, ҫавӑн пекех муниципалитет районӗсен тата хула округӗсен шкулӗсенче вӗренӗве юрӑхлӑ тӑвас енӗпе пурнӑҫлакан ӗҫ-хӗл тухӑҫлӑхне комплекслӑ хак парассине йӗркелеме хушрӗ.

Чӑваш Республикин Президенчӗ хӑйӗн Ҫырӑвӗнче палӑртнӑ нумай шухӑш-тӗллевсем патшалӑх пуҫлӑхӗ Д. Медведев Федераци Пухӑвне янӑ Ҫырура палӑртнӑ задачӑсемпе пӗр килеҫҫӗ. Апла пулсан Чӑваш Республики хӑватлӑ Раҫҫейпе пӗрле малалла аталанса пырасси куҫ кӗрет.

«Эпир ҫынсен пурнӑҫне лайӑххах, республикӑна вара илемлӗрех тӑвас тетпӗр. Ку енӗпе манӑн нимӗнле иккӗленӳ те ҫук, пачах урӑхла, сирӗнпе пӗрле ҫакна туса пултарассине пӗлсе тӑратӑп, шанӑҫ, кӑмӑл ҫирӗплӗхӗ тата ӑс пур чухне ҫитӗнӳ килетех»,– терӗ Президентӑмӑр.

Ҫӗнӗ ҫула ҫӗнӗ шухӑш-ӗмӗтпе, ҫӗнӗ вӑй-хӑватпа, тӗллевсемпе кӗретпӗр. Хамӑр енчен вара ҫак Ҫырура палӑртнӑ тӗллевсем пурнӑҫа кӗчӗр тесе пирӗнтен кашниех пӗтӗм вӑй-хала парса тӑрӑшма тивӗҫ.

**В. ДАНИЛОВ,**
**ЧР Патшалӑх Канашӗн депутачӗ, районти тӗп больницӑн тӗп врачӗ.**

## Уявсем инкексӗр иртчӗр тесе

Пӗрлехи лару

***Иртнӗ эрне кун терроропа кӗрешекен, чрезвычайлӑ лару-тӑру пуласcинчен асӑрхаттаракан тата ӑна пӗтерекен, пушар хӑрушсӑрлӑхӗпе тивӗҫтерекен, район администрацийӗн пуҫлӑхӗ ҫумӗнчи право йӗркине пӑсассинчен асӑрхаттаракан комиссисен пӗрлехи ларӑвӗ иртрӗ. Ҫакӑн сӑлтавӗ те паллӑ: Ҫӗнӗ ҫул уявӗсем ҫывхарса килеҫҫӗ.***

***– Вӗсем пӗр кӑлтӑксӑр йӗркеллӗ иртсе каймалла, – терӗ район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Ю.А. Иванов ларура.***

Районти ҫул ҫитмен ачапӑча учрежденийӗсенче терроропа актсенчен сыхланас тесе мӗн туса иртнине пӑхса тухнӑ май районти вӗренӳ, ҫамрӑксен политики, физкультурӑпа спорт пайӗн ертӳҫин тивӗҫӗсене туса пыракан И.А. Ершова ҫакна палӑртрӗ, садик территорийӗсенче пур ҫӗрте те ҫап-ҫутӑ, инкек-мӗн пулас пулсан пӗлтермелли сигнализаци, милиции чӗнмелли кнопкӑсем, автоматикӑлла майпа ӗҫлекен пушар сигнализацине пур ҫӗрте те вырнаҫтарнӑ. Кӑнтӑрла садиксене шалтан питӗреҫҫӗ. Пыра-киле ача сачӗн алӑкӗсене тимӗртен тума, домофон тата видеосӑнав оборудованийӗ вырнаҫтарас ӗмӗт пур. Терроропа актсенчен сыхланмалли мероприятисен йӗркелӳ документӗсем те пур ҫӗрте те йӗркеллӗ. Ку енӗпе ӗҫлекен яваплӑ ҫынна вӑхӑтра палӑртмаллине, ҫавӑн пекех ача сачӗсен патне пыракан ҫулсем яланах усӑ пулмаллине палӑртрӗҫ ларура. Ҫулсем усӑ пулмалла тенӗрен, пур предприятипе организаци, учреждени, ҫурт патне ҫулсем яланах усӑ пулмалла. Уявсем вӑхӑтӗнче ҫеҫ мар, кулленех.

Терроропа актсенчен сыхланас енӗпе Мӑн Сӗнтӗрти ваттисен ҫуртӗнче те пур ӗҫ те саккунпа килӗшуллӗн туса пыраҫҫӗ. «Социаллӑ пулӑшу паракан центр» ертӳҫи О.В. Иванова палӑртнӑ тӑрӑх кунта камсем килсе ҫӳренине дежурнӑй пулакан социаллӑ ӗҫченсем пӑхса тӑраҫҫӗ. Ҫӗнӗ ҫул уявӗсем вӑхӑтӗнче ҫак ӗҫе вайлатмаллине палӑртса хӑварчӗҫ. Ҫӳлерех асӑннӑ хӑрушсӑрлӑх мерисене кунта та вырнаҫтарнӑ.

Районта Ҫӗнӗ ҫул уявӗсемпе Христос ҫуралнин праҫник кунӗсене хатӗрленес ӗҫсем малалла пыраҫҫӗ районта. Ҫав шутран хӑрушсӑрлӑх мерисене йышӑнас енӗпе иртерекен ӗҫсем те. Ларура ҫак ыйтӑва уйрӑммӑн пӑхса тухнӑ май районти шалти ӗҫсен пайӗн обществӑлла хӑрушсӑрлӑх милицийӗн пуҫлӑхӗ В.А. Григорьев районта пурӑнакан ют ҫӗршыв ҫыннисем (хальлӗхе вӗсем 7) миграци законодательствине пӑхӑннине палӑртрӗ.

(Вӗҫӗ 3 стр.).

Вун пӗр уйӑх кӑтартӑвӗсем

## Выльӑх-чӗрлӗх отраслӗ

Кӑҫалхи январь–ноябрь уйӑхӗсенче чӗрӗ виҫепе аш-какай пӗтӗмпе 5247,6 тонна реализациленӗ. Ку вӑл пӗлтӗрхи ҫав вӑхӑтрин 94,2 проценчӗ чухлӗ пулать. Ял хуҫалӑх предприятийӗсенче ӑна 1342,5 тонна (100,3 процент), ҫынсен хушма хуҫалӑхӗсенче 3799,1 тонна (93,1 процент), хресчен (фермер) хуҫалӑхӗсенче 106 тонна (69,7 процент) туса илнӗ.

Сӗт пӗтӗмпе 42010,9 тонна (99,2 процент) сунӑ. Ял хуҫалӑх предприятийӗсенче сӗт 8359,7 тонна (99,6 процент), ҫынсен хушма хуҫалӑхӗсенче 33411 тонна (98,6 процент), хресчен (фермер) хуҫалӑхӗсенче 240,2 тонна (354,3 процент) сума пултарнӑ. Кашни ӗне пуҫне вӑтам сӑвӑм 4353 килограмма (102,3 процент) танлашнӑ.

Майракаллӑ шултра выльӑхсем талӑксерен вӑтамран 527,4 грамм (95,2 процент), сыснасем 302,1 грамм (90,6 процент) ӳт хушнӑ, 1869 пӑру (95,9 процент), 11239 ҫура (82,8 процент) илнӗ.

Районӗпе усӑ куракан кашни 100 гектар ҫӗр пуҫне 83,3 центнер (94,2 процент) аш-какай, 666,8 центнер (99,2 процент) сӗт туса илнӗ.

Йыхрав

## Хӗллехи сезон уҫӑлать

Хӗллехи спорт сезонне Муркашра ҫитес шӑмат кун, декабрӗн 25-мӗшӗнче, 10 сехетре уҫма палӑртнӑ. Ҫак кун Муркашри стадионта 3 километрлӑ дистанцисенче йӗлтӗрҫӗсен ӑмӑртӑвӗ иртет. Эстафетӑра хӗрарӑмсемпе арҫынсем, хӗрсемпе яшсем ӑмӑртаҫҫӗ. Пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан вӑтам тата тулли мар вӑтам шкулсен, ӗҫ коллективӗсен командисене пурне те ӑмӑртӑва йыхравлаҫҫӗ. Активлӑ пулар!

Вулакансене пӗлме

## Васкавлӑ ҫыхӑну тытма

Пушар, тӗрлӗ аварი, ҫут ҫанталӑк инкекӗ тата ытти йывӑрлӑх сиксе тухсан ун пирки вӑхӑтра шӑнкӑравласа пӗлтерни йывӑрлӑха лекнӗ кашни ҫыншӑнах чи кирли. РФ Чрезвычайлӑ лару-тӑру министерствин ЧР Тӗп управленийӗ «Пӗрлехи дежурнӑйпа диспетчер службине» республикӑра ӗҫлекен пур ҫыхӑну операторӗсенчен те шӑнкӑравсем тӳлевсӗр пулнине пӗлтерет. Кирек хӑш кӗсье телефонӗпе те (укҫа пуррипе ҫуккине пӑхмасӑрах) – 112 номерпе пӗрлехи диспетчер службине шӑнкӑравламалла.

Ҫакна манмалла мар: пулӑшу кӗтекенӗн инкек вырӑнне, ҫурт адресне, хӑй камне тӗрӗс палӑртмалла.

**А. ЕФИМОВ,**
**районти пушар надзор уйрӑмӗн аслӑ инспекторӗ.**

Саламлатпӑр

**Дорогие энергетики!**

От всей души поздравляю вас с Днем энергетика. Желаю творческих успехов, безаварийной работы и всех земных благ.

**С поздравлением: директор ООО «Энергосервис» В. МОИСЕЕВ.**



Юратнӑ мӑшӑра, аттене, асаттене, кукаҫине, хуньӑсторике, хӑтана – Ҫатракасси ялӗнче пурӑнакан **Юрий Варсанофьевич СТЕПАНОВА** 55 ҫул тултарнӑ ятпа ӑшшӑн саламлатпӑр. Сывлӑху сан ҫирӗп пултӑр, ҫемьере килӗшӳ хуҫалантӑр, мӗн ӗмӗтленни пурнӑҫлантӑр. Ачусемпе, мӑнуксемпе, тӑванусемпе савӑнса пурӑнӑр.

**Салампа: мӑшӑру, ывӑлусемпе кинӳсем, хӗрӗпе кӗрӳшӗ, мӑнуксем, хӑтипе тӑхлачисем, тӑванусем.**

Юратнӑ мӑшӑра, хӗрӗме, аннене, мӑнукӑма, кинӗме – **Татьяна Сергеевна ШАРИКОВӐНА** ҫуралнӑ кунӗ ячӗпе саламлатпӑр. Эпир сана ҫирӗп сывлӑх, ӗҫкӗлми телей, ӗҫре пысӑк ҫитӗнӳсем тума сунатпӑр. Тавах сана ырӑ кӑмӑлушӑн, сывлӑх хураленче ӗҫленӗ май, сана сывалма ҫӳрекен ҫынсем ӑнланчӑр, ҫемьелеччӗр, кил-йышра яланах килӗшӳ хуҫалантӑр.

**Саламлаканӗсем: ашшӗпе амӑшӗ, мӑшӑрӗ, хуньамӑшӗ, хуньашшӗ, кукамӑшӗ, Налимовсен, Мироваевсен, Авдеевсен, Сергеевсен, Алексеевсен ҫемйисем.**

Ярапайкасси ял тӑрӑхне кӗрекен Елача ялӗнче пурӑнакан юратнӑ аннене, ырӑ кӑмӑллӑ кукамая, хисеплӗ хунямана – **Анастасия Филипповна СОРОКИНӐНА** 85 ҫул тултарнӑ ятпа ҫирӗп сывлӑхпа вӑрӑм ӗмӗр, тулӑх пурнӑҫпа телей курса пурӑнма ырӑ сунса ӑшшӑн саламлатпӑр.

Кил-ҫурту тӑвансемпе юлташсенчен, сӗтелӳ ҫӑкӑр-тӑвартан, кӑмӑлу ҫемье юратӑвӗнчен ан татӑлтӑр. Эпир сана ӑша кӑмӑллӑ пулнишӗн тата кирек хӑҫан та пулӑшма май тупнишӗн тав тӑватпӑр.

**Салампа: ывӑлӗсемпе кинӗсем, хӗрӗсемпе кӗрӳшӗсем, 14 мӑнукӗ, 8 кӗҫӗн мӑнукӗ.**

Ҫырӑнтару

**Хаклӑ вулаканӑм!**
**Райхаҫата ҫӗнӗ ҫултан илсе тӑма ҫырӑнтарас тапхӑр малалла пырать. Ҫырӑнтару хакӗ унччченхиех – 191 тенкӗ те 70 пус (ултӑ уйӑха).**

# Тĕп тивĕç – çынсен ыйтăвĕсене тивĕçтересси

*РФ Пенси фончĕ 20 çул тултарнине халалланă кăларăм*

## 20 çул пысăк тапхăр мар пулин те

***Хаклă коллегăсем – Пенси фончĕн ĕçченĕсем!***

***Пенси фончĕн çуралнă кунĕ ячĕпе сире чĕререн саламлатăп! Пурсăра та ырлăх-сывлăх, телей, çĕнĕ çитĕнӳсем сĕнетĕп. Яланах ăнăçусем пулчăр сирĕн пархатарлă ĕçĕрте!***

**Е. АЛЕКСАНДРОВА, управлени пуçлăхĕ.**



1991 çулта Раççей Пенси фончĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕ шутĕнче Муркаш районĕнчи уполномоченнăйсен службине туса хунă.

1991–1996 çулсенче страховани взносĕсем тӳлекенсене пурне те регистрациленĕ, страховани взносĕсене тĕрĕс тата вăхăтра тӳленине тĕрĕслесе тăнă, куçнă тӳлев суммисене шута илсе пынă.

1997–1999 çулсенче «Об индивидуальном (персонифицированном) учете в системе государственного пенсионного страхования» Федераллă саккунпа çыхăннă хушма функцисемпе задачăсене пурнăçланă. Персонифицированнăй учет системинче страхланнă çынсене регистрациленĕ, харпăр хăйĕн сведенийĕсене пухса йĕркене кĕртнĕ.

2001 çулта Пенси фончĕн уполномоченнăйĕсен службин бази çинче фондăн Муркаш районĕнчи юридици вăйĕнчи управленине туса хунă. Кунпа пĕрлех пенсисем шутласа парассин тата тӳлессин полномочийĕсене те управление панă. Ĕçлекен граждансен пенси прависен учетне туса пынă.

2002–2005 çулсенче пенси системине реформăланă май пенси законодательствин çĕнĕ нормисене пурнăçа кĕртнĕ. Граждансен уйрăм категорийĕсене патшалăх социаллă пулăшу памаллин системине реформăлама хутшăннă.

2007 çулта «О дополнительных мерах государственной поддержки семей, имеющих детей» Федераллă саккун нормисене пурнăçа кĕртме тытăннă.

2008 çулта «О дополнительных страховых взносах на накопительную часть тудовой пенсии и государственной поддержке формирования пенсионных накоплений» Федераллă саккун нормисене пурнăçа кĕртессипе ĕçлеме пуçăннă.

2009 çулта «О внесении изменений в Федеральный закон «О дополнительных мерах государственной поддержки семей, имеющих детей» Федераллă саккунпа пăхнă пек ача амăшĕн (çемье) капиталĕпе çурт-йĕр кредичĕсемпе заемĕсене саплаштарассипе заявленисем йышăнма тытăннă.

## Пенсисемпе тивĕçтересси пысăк пĕлтерĕшлĕ

Страхланă çынсене пенси шутласа парас, çĕнĕрен шутласа парас тата тӳлес, пенси прависене хак парас енĕпе ĕçлекен пайра 13 специалист вăй хурать.

2010 çулхи декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне районта 9933 пенсионер шутланнă. Вĕсен хисепĕ чакни палăрать. Акă 2005 çулта районта 10551 пенсионер пулнă. Çулталăк пуçланнăранпа çĕнĕрен 474 çын пенси илме тытăннă. Ытларахăшĕ ватлăха пула паракан ĕç пенсине илет. 2010 çулта çемьере тăрантаракана çухатнипе паракан социаллă пенси шучĕпе патшалăх пенсине илсе тăма пуçăнакансен йышĕ ӳсни палăрать. Юлашки çулсенче пенси законодательствин нормисемпе килĕшӳллĕн пур йышши пенсисене парса тăрассине те 10 кун хушшинче йĕркелесе çитерне.

Халĕ ватлăха пула паракан ĕç пенсийĕн вăтам виçи 4605 тенкĕпе танлашать е 2005 çулхинчен 2543 тенкĕ пысăкрах, инвалида тухнипе паракан ĕç пенсийĕ 3460 тенкĕ (1849 тенкĕ пысăкрах), çемьере тăрантаракана çухатнипе паракан ĕç пенсийĕ 2750 тенкĕ (1542 тенкĕ пысăкрах), патшалăх пенсийĕ 3003 тенкĕ (1157 тенкĕ пысăкрах). Федераллă çăмăллăхсемпе усă куракансене уйăхсерен тӳлессин виçи 2005 çулхинчен икĕ хут ӳснĕ.

**Пенси прависене конвертацилесси**

Страхланă çынсен пенси прависене конвертациленĕ чухне страхланисен обязательнăй пенси страхованийĕн системинче регистраци тăвичченхи ĕç стажĕ пирки сведенисем илесси, вĕсен пенси прависене хак парасси тĕп вырăнта пулса тăрать. Кăçалхи декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне конвертаци документсен тĕрĕслевне вĕçленĕ, пĕтĕмпе 12969 тĕрĕслев ирттернĕ. Страхланă 1315 çынна хăйсен пенси прависене хак панин кăтартăвĕсемпе паллаштарнă.

Пенсие тухма хатĕрленекенсен ĕç хучĕсене хатĕрлессипе активлă ĕç пырать. 2007 çултан тытăнса пенси ĕçĕсен 1315 макетне йĕркеленĕ, вăл шутран 2010 çулта – 372. Пурне те вĕсене хăйсен пенси прависене хак панин кăтартăвĕсемпе паллаштарнă. Çĕнĕрен 1958 документа базăна кĕртнĕ.

Федераллă саккунпа килĕшӳллĕн кăçал 8882 ĕç пенсине валоризациленĕ, 856 пенсионер федераллă социаллă хушма тӳлев илме тытăннă. Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа 65 çул çитнĕ май 1919 çынна 4 миллион та 059 пин тенкĕ пĕр хут укçан тӳленĕ.

2010 çулхи 9 уйăхра документсен 4 тĕрĕслевне, почта уйрăмĕсенче тата 2 кредит учрежденийĕнче пенсисем тата ытти тӳлевсем çитерсе парассине епле йĕркеленине палăртма 6 тĕрĕслев ирттернĕ.

## Кадрсенчен килет пĕтĕмпех

Кадрсен политикин тĕп тĕллевĕ вăл – кадрсен потенциалне сыхласа хăварасси, çирĕплетсе тата аталантарса пырасси; обществăри тата ĕç рынокĕнчи, пенсипе тивĕçтерессинчи улшăнусене хăвăрт алла илме пултаракан, пысăк тухăçлă ĕçлекен çирĕп коллектив чăмăртасси.

Кăçалхи декабрĕн 30-мĕшĕ тĕлне управленире 30 çын вăй хунă. Вăл шутран 27 специалист тата кĕçĕн персонал 3 çын.

Ĕçлекен специалистсенчен 24-шĕ (80,9 процент) аслă пĕлӳ, вăл шутран 18-шĕ (60 процент) профильлĕ аслă пĕлӳ илнĕ.

Персоналăн тепĕр пĕлтерĕшлĕ характеристики вăл – ĕç опычĕ. Пĕр çулталăк ĕçлекенсем кунта 1 çын, 1–5 çул ĕçлекенсем 9-ăн, 5–10 çул ĕçлекенсем 16-ăн, 10 çул ытла ĕçлекенсем 4-ăн.

Ӳсĕм шайĕпе илес пулсан 30 çула çитменнисем 5 çын, 30–40 çултисем 9 çын, 40–50 çултисем 8 çын, 51–60 çултисем 8 çын.

## Ĕçре те маттур, канура та сатур



***Пенси фончĕн ĕçченĕсем ĕçлеме кăна мар, культурăллă канма та пĕлеççĕ. Районти тата Пенси фончĕн ĕçченĕсен республикăри пĕрлештернĕ профсоюз комитечĕ йĕркелекен спорт мероприятийĕсене активлă хутшăнаççĕ. Управлени команди çуллен ирттерекен хĕллехи тата çуллахи спартакиадăсенче пĕр хут кăна мар призлă вырăнсене тивĕçнĕ. Н.В. Тимофеева, Э.С. Акчурин, С.А. Романова спортпа уйрăмах туслă.***

***2008 çулта Муркаш, Элĕк, Етĕрне тата Хĕрлĕ Чутай районĕсен пĕрлештернĕ «Маяк» команди Çĕрпӳре гражданла оборона енĕпе ирттернĕ вĕренӳре пĕрремĕш вырăн йышăннă. Пĕрлехи массăллă тĕрлĕ мероприятисем хавасла иртеççĕ. 2010 çулхи сентябрĕн 30-мĕшĕнче Пенси фончĕн ĕçченĕсен республикăри художество пултарулăх фестивальне хутшăннă (сăн ӳкерчĕкре). Ĕçпе спорт, культурăллă кану яланах юнашар.***

## Хисеп грамотине тивĕçнĕ

Çынсен ыйтăвĕсене тивĕçтерессин сферинче нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн район администрацийĕн пуçлăхĕн 2010 çулхи декабрĕн 10-мĕшĕнчи 965 № йышăнăвĕпе РФ Пенси фончĕн Муркаш районĕнчи управленийĕн пай пуçлăхне **Ольга Николаевна АЛЕКСЕЕВĂНА** район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

## Укçа шута юратать

Финанспа экономика ушкăнĕнче икĕ специалист бюджет учетне ятарлă инструкципе килĕшӳллĕн туса пырать. Тупăшсемпе тăкаксен сметине пурнăçланин бюджет учетне, бюджета пурнăçлассине, ĕç укçи шутласа панин учетне «1С: Предприятие» программа комплексĕпе йĕркелесе тăраççĕ.

Пенсисем, пособисем тӳлеме каякан укçа-тенкĕ калăпăшĕ çуллен ӳссе пырать. Ку вăл пенсисене индексациленипе тата Раççей Федерацийĕн Правительстви туса ирттерекен ытти мероприятисемпе çыхăннă. 2010 çулхи декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне ку сумма 737 миллион та 970 пин тенкĕпе танлашнă.

## Парăмçисем те, парăмĕсем те сахалрах пулччăр



***Пултарулла ĕçченсенчен пĕри – ертсе пыракан специалист (юрист) Наталия Владимировна Порфирьева.***

Управлени страховани взносĕсемпе çирĕплетнĕ тӳлевсем енĕпе пухăннă парăмсене, пенисене шыраса илессипе уйрăм ĕçсем туса ирттерет. Ку енĕпе законодательствăна пăснăшăн çулталăк пуçланнăранпа Чăваш Республикин сучĕсене пĕтĕмĕшле 491 пин тенкĕлĕх 24 иск заявленийĕ тăратнă. Иртнĕ çул çулталăкĕпе 24 иск заявленийĕ пĕтĕмĕшле 1 миллион та 706 пин тенкĕлĕх тăратнă пулнă.

Иртнĕ çулхи пекех парăмсем ытларах çирĕплетнĕ тӳлев шучĕпе страховани взносĕсем тӳлессипе çыхăннă. Пĕтĕмĕшле илсен судсем управлени требованийĕсене тивĕçтереççĕ.

## Пенсисене страхлатпăр, страховани взносĕсене администрацилетпĕр

Харпăр хăй учечĕ, страховани взносĕсене администрацилес, страховательсемпе çыхăнса ĕçлес тата парăмсене шыраса илес енĕпе ĕçлекен пай Пенси фончĕн управленийĕн структура подразделенийĕ пулса тăрать. Кунта 8 çын вăй хурать. Вĕсем хăйсен тивĕçĕпе килĕшӳллĕн тĕрлĕрен Федераллă саккунсен положенийĕсене пурнăçа кĕртессине йĕркелессипе ĕçлеççĕ. Тĕп задача – Пенси фончĕн бюджечĕн тупăш пайне пурнăçласси.

Кăçалхи декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне управленире «одно окно» технологипе 183 страхователе регистрациленĕ. Вăл шутра юридици вăйĕнчи 17 çынна, 169 уйрăм предпринимателе, 39 хресчен-фермер хуçалăхĕн ертӳçине. Пенси фончĕн органĕсенче регистрациленме 225 пĕлтерӳ ярса панă. Заявлени панипе ĕç паракан 13 уйрăм предпринимателе, вăл шутра 3 адвоката регистрациленĕ.

2003 çултан тытăнса Пенси фончĕ страхланă çынсен пухăнакан пенсине инвестицилессин ыйтăвĕсемпе те ĕçлесе пырать. 2010 çулта кăна пухăнакан пенсисене инвестицилеме 131 заявлени йышăннă. Вăл шутран 33 заявлени ертсе пыракан компание суйласа илессипе тата 98 заявлени патшалăхăн шутланман Пенси фондĕнчен Раççей Пенси фондне куçассипе. Реформа пуçăннăранпа вара управлени специалисчĕсем страхланă çынсенчен 1870 заявлени йышăннă.

Саккунпа пăхнă пекех кăçалхи мартăн 1-мĕшĕ тĕлне 2009 çулшăн, августăн 1-мĕшĕ тĕлне кăçалхи пĕрремĕш çур çулшăн харпăр хăйĕнчен страховани стажĕ тата страховани взносĕсем мĕн чухлĕ куçни пирки сведенисем илессине вĕçленĕ. Ытларах страховательсем (предприятисемпе организацисем) отчетсене вăхăтра тăратнă. 2009 çулшăн районти 303 страхователь страхланă 12139 çыншăн, 2010 çулхи пĕрремĕш çур çулшăн 287 страхователь страхланă 9338 çыншăн отчетсем тăратнă. Ку предприятисенче ĕçлекенсем хăйсен лицевой счечĕсем çинче страховани взносĕсем куçни пирки сведенисем пуласса шанма пултараççĕ.

Федераллă саккунпа килĕшӳллĕн пай çине ача амăшĕн капиталĕн сертификачĕсене парассин тата ăна тӳлессин тивĕçĕсене те хунă. 2007 çултан тытăнса ку тĕлĕшпе 830 заявлени йышăннă. Федераллă саккуна улшăнусем кĕртнĕ май вара 2009 çултан тытăнса 129 заявлени пĕтĕмпе 37 миллион та 218 пин тенкĕлĕх çурт-йĕр кредичĕсене тата заемĕсене саплаштарма йышăннă. Кунпа пĕрлех пĕр хутчен 12 пин тенкĕ паракан тӳлеве илме ыйтса заявлени çыракансем 2009 çулта 534, 2010 çулта 474 çемье пулнă.

2008 çулхи октябрьте пай граждансенчен пенсисене патшалăх финанслассин программине кĕме заявленисем йышăнма тытăннă. 2010 çулхи декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне районти 633 çын асăннă программа участникĕ пулса тăнă.

**Кăларăма В. ШАПОШНИКОВ хатĕрленĕ.**

# Сывлăх яланах малта



## Сывă пурнăç йĕркишĕн

***ЧР Президенчĕн Патшалăх Канашне янă Çырăвĕнче сывă пурнăç йĕркине пăхăнассине те малтисен ретне кăларнă. Вăрттăнлăх мар, кун йĕркинче тăракан ыйтусене сывă та тĕреклĕ çын кăна вăхăтра та пахалăхлă татса парайрать. Районта пурăнакансен сывлăхне çирĕплетессипе вара «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕ пысăк ĕç туса ирттерет. Çавăнпа кунтан çын татăлманнине ăнланма пулать. Асăннă комплексра ĕçлекенсем хăйсем те сывă пурнăç йĕркине тытса пырас, физкультурăпа спорта аталантарас ĕçре ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăраççĕ. Раштав уйăхĕн 17-мĕшĕнче Йĕпреçри «Патвар» физкультурăпа спорт комплексĕнче ЧР Физкультурăпа спорт тата туризм министерстви йĕркеленипе çак отрасльте вăй хуракансен спорт фестивалĕ иртрĕ. Тӳрех каламалла, унта хутшăннă 20 команда хушшинче пирĕн «Сывлăх» ФСК команди (сăн ӳкерчĕкре) 2-мĕш вырăна тухнă. Пирĕн команда фестивальти пур ăмăртусене те чыслă хутшăннă, 5-мĕш вырăнтан аялараx анни пулман. О. Лоцмановăн çемйи вара шывра жемчуг шырассипе те (2-мĕш вырăн), эстафетăра ишессипе те (3-мĕш) палăрнă.***

***А. БЕЛОВ.***

# Уявсем инкексĕр иртчĕр тесе

## Пĕрлехи лару

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1 стр.).**

Шкулсемпе ача сачĕсенчен çурринче пулса, хăрушсăрлăх енĕпе лару-тăру мĕнле шайра пулнине тĕрĕсленĕ. Декабрĕн 20-25-мĕшĕсенче культура учрежденийĕсенче иртет çак тĕрĕслев. Христос çуралнин кунĕ умĕн кĕлĕсем ирттеричен районти 10 чиркĕве те хăрушсăрлăх енчен тĕпчеме палăртаççĕ районти шалти ĕçсен пайĕн ĕçченĕсем. Уявсем вăхăтĕнче вăл иртекен вырăнсенче милици нарядĕ пулать. Çак эрнере вара çакнашкал тĕрĕслев пасарсемпе лесничествăсенче те иртет. Çакна чăрăшсене саккуна пăсса касса сутасран асăрхаттарас тĕллевпе ирттереççĕ.

**Кунта çакна каласа хăвармалла. Пиротехника хатĕрĕсене туяннă чух районта пурăнакансен çакна асра тытмалла. Китайра туса кăларнă пиротехника хатĕрĕсем час хыпса илес хăрушлăх пысăк. Çавăнпа та вĕсене туянни хамăра хамăр хăрушлăха кĕртсе ӳкернипе пĕрех. Çакăн çинчен район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов палăртсах каларĕ ларура. Декабрĕн 28-мĕшĕнчен пуçласа районти йĕрке хуралçисем вăйлатнă режимпа ĕçлеççĕ.**

Госпожнадзор уйрăмĕн ертӳçи И.Н. Смирнов культура учрежденийĕсен умĕнче электричество çути пулмаллине палăртрĕ. Хальлĕхе вара вăл пур çĕрте те çукха. Çĕнĕ çул уявĕсене культура учрежденийĕсенче декабрĕн 31-мĕшĕччен ирттерни вырăнлă пулмалла текен шухăшпа ларура пурте килĕшрĕç. Уявсем вăхăтĕнче пĕтĕм яваплăх хăйсем çинче пулмаллине пĕр самантлăха та манмалла мар вĕсен ертӳçисен.

Çакă вĕрентӳ учрежденийĕсен ертӳçисене те пырса тивет. Елка вăхăтĕнче шкулсемпе ача сачĕсене ют çынсем кĕрессинчен сыхланмаллине йĕркелемелле: контрольпе пропуск режимĕ тĕп вырăнта пулмалла.

Ларура çавăн пекех ял тăрăхĕсенче профилактика кунне ирттерес ыйтăва пăхса тухрĕç. Ăна кашни кĕçнерни кун ирттерме йышăнса хăварчĕç. Ун вăхăтĕнче районти шалти ĕçсен пайĕн, район администрацийĕн тата республика шайĕнчи структурăсен представителĕсем графикпа килĕшӳллĕн ял тăрăхĕсенчи йывăр çемьесенче пулаççĕ, ирĕкрен хăтарнă вырăнсенчен таврăннисемпе тĕл пулаççĕ, культура учрежденийĕсенче, шкулсенче пулаççĕ тата ытти те. Ку таранчченхи опыт çакна кăтартса парать: çак мероприятин эффективлăхĕ пысăк. Вăл малалла та пулĕ. Пушар хăрушсăрлăхĕн ыйтăвĕпе те уйрăммăн тĕплĕ калаçу пулчĕ ларура.

– Пирĕн пурин те кирек епле лару-тăрăва та хатĕр пулмалла. Чрезвычайлă лару-тăру сиксе ан тухтăр тесе пур мерăсене те йышăнмалла. Апла пулсан пурин те яваплăха туйса пурнăçламалла хамăр тивĕçе. Çĕнĕ çул уявĕсем те хамăр пăхса хăварнă плантан пăрăнса каймасăр иртмелле, - терĕ Юрий Александрович. Çакă вăл уявсем йĕркеллĕ иртесси хамăртан килнине пĕлтерет. Уявсем кăна мар, кулленхи пурнăç йĕркеллĕ пуласси те хамăртанах килет.

**Л. ПАВЛОВА.**

## 01 пĕлтерет, асăрхаттарать

# Çĕнĕ çул инкекпе ан туслаштăр

Районти пушар хăрушсăрлăхне тишкерсен иртнĕ çулсенче вут-кăвар алхаснă инкексем сахалланни палăрчĕ пулсан та, ирĕке кайнă вут-çулăмра çавçавах çынсен пурнăçĕ татăлни пушар хăрушсăрлăхĕ яланах çӳллĕ шайра пулнине çирĕплетсех тăрать. Кăçал паянхи куна район территорийĕнче вут-кăвар алхаснă инкексем пĕлтĕрхи шайрах (35 пушар) юлчĕç. Пĕлтĕр те, кăçал та миллионшар тенкĕлĕх пурлăх кĕлленнипе пĕрлех пĕршер çын пурнăçĕ вăхăтсăр татăлнинчен Муркашсем тĕрĕс пĕтĕмлетӳ тăвасса шанатпăр. Çакна çеç калатăп, ытларах инкек хыçĕнче эрехсăра тата унпа туслашнă май тимлĕхе çухатни тăрать. Умра пĕтĕм халăх пĕрле уявлакан Çĕнĕ çул уявĕсем. Кунта та эрех-сăрасăр пулас çукки иккĕлентермест. Апла пулсан пĕрлехи асăрханулăха пурин те ӳстермелле.

Çĕнĕ çула кĕтсе илессине халăх пысăк уяв вырăннех йышăнать. Ку тĕлĕшпе коллективсенче çĕнĕлĕхсем кĕртеççĕ, елка илемне ӳстерме чылайăшĕ электричество çутипе, çуртасемпе, пиротехника изделийĕсемпе усă курать. Халĕ каланине шута илсе шăпах çак тапхăр пушар тухаслăх тĕлĕшпе пысăк хăрушлăх кăларса тăрататъ. Иртнĕ çул Çĕнĕ çул уявĕсем вăхăтĕнче районта 3 пушар пулнăччĕ. Çак инкексем кăçал ан пулччăр тата Çĕнĕ çул уявĕсене «хĕрлĕ автан» ан тĕксĕмлеттĕр тесе кашнийĕнех пушар хăрушсăрлăх правилисене çирĕп пăхăнмаллине маларахах асăрхаттаратпăр. Çав тĕллевпе:

– елкăсем ирттерме коллективсенче хальтерех ответлă çынсене çирĕплетмелле;

– яваплă çынсен патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕнче пушар хăрушсăрлăхĕпе ятарлă инструктаж тухмалла, вĕсен çавнах вырăнсенче Çĕнĕ çул уявне ирттерме хутшăнакансемпе пурнăçламалла;

– елка ирттериччен пӳлĕмсене тĕплĕн тишкерсе тухмалла, пушар сӳнтермелли пирвайхи хатĕрсем çителĕклĕ пулас тĕлĕшпе уйрăмах тимлĕх уйăрмалла;

– елка вăхăчĕ пирки вырăнти пушар хуралне маларах пĕлтермелле;

– елкăна пушар хуралĕн ирĕкĕсĕр вырнаçтарма юрамасть;

– елка ирттермелли пӳлĕмĕн обязательнăй йĕркепе урама тухма икĕ алăк пулмалла;

– елкăна алăксем патне вырнаçтарас çук, унпа стена тата мачча хушши пĕр метртан кая мар пулмалла;

– елкăна илемлетме хăвăрт хыпса илекен теттесемпе, ватăпа, бенгали çуртисемпе усă курма юрамасть;

– елкăна заводра хатĕрленĕ электрогирляндăсемпе çеç илемлетмелле.

Яваплă çынсен уяв вăхăтĕнче асăрханулăха самантлăха та хăй еккипе яма юрамасть. Ответлăх пирки манмалла мар. Электрогирляндăсем çинче пĕчĕк кăлтăк асăрхасанах электричествăна пĕр тăхтамасăр сӳнтермелле. Елка çинче çулăм курăнсассăн аслисен елкăна çийĕнчех çĕре ӳкермелле те хăвăрт сӳнтерме мерăсем йышăнмалла. Искусствăлла елкăна шывпа сӳнтерни тĕрĕс мар, мĕншĕн тесен çуннă чух синтетика ирĕлет, шыв лексен вĕресе кайса шыв юххипе айккинелле сарăлма, хушма хăрушлăх кăларса тăратма пултарать. Кун пек чухне огнетушитель – чи вырăнли. Çавăнпа та елкăна хатĕрленекенсен ăна ВДПОн районти уйрăмĕнче маларах çителĕклĕ туянса хумалла.

**И. СМИРНОВ,**
**районти пушар надзор уйрăмĕн пуçлăхĕ.**

## Официально

**Чувашская Республика**
**Собрание депутатов**
**Кадикасинского сельского поселения**
**Моргаушского района**
**РЕШЕНИЕ**
**17.12.2010 г. № С-4/2**
**д. Кадикасы**
**О назначении повторных выборов депутата Собрания депутатов Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района по одномандатному избирательному округу № 7**

В соответствии со статьями 10 и 71 Федерального закона № 67 - ФЗ «Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации», статьями 5 и 49 Закона Чувашской Республики «О выборах в органы местного самоуправления в Чувашской Республике» и Уставом Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики, Собрание депутатов решило:

1. Назначить повторные выборы депутата Собрания депутатов Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района по одномандатному избирательному округу №7 на 13 марта 2010 года.
2. Настоящее решение подлежит официальному опубликованию.

**Глава Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района**
**Г.Г. ЛЕБЕДЕВ.**

**Чувашская Республика**
**Собрание депутатов**
**Ильинского сельского поселения**
**Моргаушского района**
**РЕШЕНИЕ**
**17.12. 2010 г. № С-4/2**
**д. Тренькино**
**О назначении повторных выборов депутата Собрания депутатов Ильинского сельского поселения Моргаушского района по одномандатному избирательному округу № 2**

В соответствии со статьями 10 и 71 Федерального закона № 67 - ФЗ «Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации», статьями 5 и 49 Закона Чувашской Республики «О выборах в органы местного самоуправления в Чувашской Республике» и Уставом Ильинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики, Собрание депутатов решило:

1. Назначить повторные выборы депутата Собрания депутатов Ильинского сельского поселения Моргаушского района по одномандатному избирательному округу № 2 на 13 марта 2010 года.
2. Настоящее решение подлежит официальному опубликованию.

**Глава Ильинского сельского поселения Моргаушского района**
**Ю.В. ПЕРЦЕВ.**

**Чувашская Республика**
**Собрание депутатов**
**Большесундырского сельского поселения Моргаушского района**
**РЕШЕНИЕ**
**17.12.2010г. № С- 4/2**
**село Б.Сундырь**
**О назначении повторных выборов депутата Собрания депутатов Большесундырского сельского поселения Моргаушского района по одномандатному избирательному округу № 10**

В соответствии со статьями 10 и 71 Федерального закона № 67 - ФЗ «Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации», статьями 5 и 49 Закона Чувашской Республики «О выборах в органы местного самоуправления в Чувашской Республике» и Уставом Большесундырского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики, Собрание депутатов решило:

1. Назначить повторные выборы депутата Собрания депутатов Большесундырского сельского поселения Моргаушского района по одномандатному избирательному округу № 10 на 13 марта 2010 года.
2. Настоящее решение подлежит официальному опубликованию.

**Глава Большесундырского сельского поселения Моргаушского района**
**А.В. ЛАПТЕВ.**

**Чувашская Республика**
**Собрание депутатов**
**Александровского сельского поселения**
**Моргаушского района**
**РЕШЕНИЕ**
**17.12.2010 г. № С-4/2**
**село Александровское**
**О назначении повторных выборов депутата Собрания депутатов Александровского сельского поселения Моргаушского района по одномандатному избирательному округу № 3**

В соответствии со статьями 10 и 71 Федерального закона № 67 - ФЗ «Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации», статьями 5 и 49 Закона Чувашской Республики «О выборах в органы местного самоуправления в Чувашской Республике» и Уставом Александровского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики, Собрание депутатов решило:

1. Назначить повторные выборы депутата Собрания депутатов Александровского сельского поселения Моргаушского района по одномандатному избирательному округу № 3 на 13 марта 2010 года.
2. Настоящее решение подлежит официальному опубликованию.

**Глава Александровского сельского поселения Моргаушского района**
**С.Г. НИКИФОРОВА.**

## Присяжнăй заседательсен кандидачĕсен пĕтĕмĕшле списокне кĕртекен граждансем

– **Лев Степанович Андреев,** 1964 çулхи мартăн 7-мĕшĕнче çуралнă, Кивĕ Матьăк ялĕнче, Складская урамра, 1-мĕш çуртра пурăнать.

– **Людмила Валерьевна Ванюшкина,** 1981 çулхи апрелĕн 6-мĕшĕнче çуралнă, Мăн Сĕнтĕр ялĕнче, Советская урамра, 13-мĕш çуртра, 2-мĕш хваттерте пурăнать.

– **Надежда Александровна Васильева,** 1962 çулхи мартăн 18-мĕшĕнче çуралнă, Уйкас ялĕнче, Металлист урамĕнче, 21-мĕш çуртра пурăнать.

– **Игорь Юрьевич Захаров,** 1971 çулхи майăн 16-мĕшĕнче çуралнă, Отаркка ялĕнче, Афанасьев урамĕнче, 20-мĕш çуртра пурăнать.

– **Валериан Игоревич Маринкин**, 1981 çулхи июлĕн 17-мĕшĕнче çуралнă, Мăн Сĕнтĕр ялĕнче, Горький урамĕнче, 28-мĕш çуртра пурăнать.

– **Людмила Михайловна Миронова,** 1959 çулхи июлĕн 8-мĕшĕнче çуралнă, Ятман ялĕнче, Центральная урамра, 18-мĕш çуртра пурăнать.

– **Валентина Аркадьевна Налимова,** 1971 çулхи апрелĕн 28-мĕшĕнче çуралнă, Мулкачкасси ялĕнче, Уралекки урамĕнче, 109-мĕш çуртра пурăнать.

– **Лариса Александровна Раскова,** 1981 çулхи ноябрĕн 28-мĕшĕнче çуралнă, Тренккă ялĕнче, Волжская урамра, 49-мĕш çуртра пурăнать.

– **Владимир Николаевич Федькин,** 1964 çулхи июлĕн 16-мĕшĕнче çуралнă, Муркаш ялĕнче, Заводская урамра, 9-мĕш çуртра пурăнать.



# Пĕрре вăрланă, иккĕ вăрланă...

**Следстви пайĕнчен**

***Иккĕ çеç те мар. Иштерекре пурăнакан К. кăçал килĕнче савăт-сапа, ытти хатĕр-хĕтĕр сахаллине туйса илнĕ тейĕн. Март уйăхĕнчен пуçласа пахчари йăрансем çинче çум курăкĕ тапса тухиччен çак ыйтăва татса парас тесе тимленĕ.***

Хăйĕн пĕрремĕш «сунарне» вăл мартăн 22-мĕшĕнче тухать. «Пищевик» коллективлă сад пĕрлешĕвне çитсе унти пĕр дача çуртĕнчен алюминирен тунă икĕ çатма тата 50 литр кĕрекен шыв ямалли савăт вăрласа тухать. Тепĕр каçхине вара çак арçын «Бодрость» пĕрлешĕве çитет. Кунти пĕр дача лаптăкĕнчи çăлăн параппанĕпе пĕрле 8 метр тăршшĕ тимĕр трос, цинк витре те Иштереке шыв ăсма «каяççĕ».

Пĕр уйăх каннă хыççăн К. велосипедсем çине куçать. Пĕрне хăй пурăнакан ялтах, теприне юнашар ялтан «тупать».

Май уйăхĕнче вара хĕллехи саппассем пĕтсен арçын хырăм выççине туйма пуçлать. Таврари тĕрлĕ ялсене çитсе мĕн кăна вăрламасть пуль: çăкăр, чăх какайĕ, шурă эрех, пирус, кивĕ телевизор, пысăк хунар, макарон изделийĕсем тата ытти нумай-нумай çимĕçпе вак-тĕвек хатĕр-хĕтĕр.

Çынсене кӳнĕ тăкак пĕчĕк мар – пĕтĕмĕшле 7 пин тенкĕ ытла. Çакна суд ларăвĕнче К. пĕр хирĕçлемесĕрех йышăнать. Айăплавпа та килĕшет. Айăплава пурнăçа кĕртме ĕçе судра тишкермесĕрех йышăнма ыйтса та çырать вăл.

Хăй пурăнакан вырăнта ăна эрех-сăрапа иртĕхекен çын тесе палăртаççĕ. Обществăлла йĕркене пăсни те пулнă. Судпа психиатри тишкерĕвĕ арçын тĕрлĕ чирчĕрпе чирлине пĕлтерет.

Сакăр хут «сунара» тухнăшăн суд К.-на 2 çул та 3 уйăхлăх ирĕкрен хăтарма йышăнать. Ун çине штраф хуман, унăн ирĕкне те чакармаççĕ. Çак наказание условлă майпа пурнăçлама 2 çул тĕрĕслев срокĕ парса çирĕплетет. Çапла вара «сунарçăн» пурăнакан вырăнтан тивĕçлĕ органсене пĕлтермесĕр куçма юрамасть, ĕç тăвакан уголовлă инспекцие те тăтăшах регистрациленме çӳремелле…

Ултавлă ĕçсем, тĕрлĕ преступленисем тăвакан çынсем районта сахал мар. Акă кăçалхи 11 уйăхра çеç пирĕн следовательсем 162 уголовлă ĕç пуçарнă. Вĕсенчен 90-шне вĕçленĕ. Айăплав пĕтĕмлетĕвĕпе суда 87 ĕç панă. Çак ĕçсем тăрăх пурĕ 89 çын йĕркене пăсни паллă. Ку тапхăрта пурĕ 3 уголовлă ĕçе чарса лартнă.

**К. ПЕТРОВ,**
**районти шалти ĕçсен пайĕ çумĕнчи следстви уйрăмĕн пуçлăхĕ.**

# Соляри уçăлчĕ

Раççейре пурăнакан кашни çын ультрафиолет дозине кирлĕ чухлĕ илсе çитерейместь. Çĕр-шывăн çурçĕр районĕсенче пурăнакансем 180 кун таран хĕвел çутине кураймаççĕ.

Ультрафиолет çитменни минераллă веществосен ылмашăвне пăсать, иммунитета чакарать, çын ывăнакан пулать, депресси патне илсе пырать.

Д3 витамин организма тĕрлĕ майпа лекет. Сăмахран вăл сĕтпе пулăра чылай. Çавăн пекех вăл организмра хĕвел пайăркисем пулăшнипе те пухăнать. Организм ăна кирлĕ чухлĕ йышăнать. Çапла вара кальци те çителĕклĕ пулать. Д витаминсăр кальци организмра 10-15 процент чухлĕ çеç тытăнса юлать, Д витаминпа кальци 80 процент таран пухăнать.

Солярире пулни хĕвел çути çитменнине саплаштарма пулăшать. Çапла вара рахит, псориаз, дерматит, нейродермит, экзема чирĕсенчен асăрханма пулать. Остеохондроз, артрит, бронхит, ринит чирĕсем те сирĕнтен пăрăнса иртĕç.

Солярире пулни сирĕн сывлăха упрать çеç мар, илемлĕ пулма та пулăшать. Тĕксĕм тĕс çапнă ӳт хĕлле пушшех хитрен курăнать. Çапах та малтан сиплекен тухтăрпа канашлама манмалла мар.

Солярие килес умĕн косметикăна тасатмалла, çӳçе упрама калпак илмелле. Кунта ятарлă куçлăх, кремсем те пур.

Соляри «Сывлăх» ФСКра вырнаçнă.

Тел.: 8-960-300-79-80.

**А. ИВАНОВА.**

**ГИБДД пĕлтерет**

# «Автобус» операци

Чăваш Республикин Шалти ĕçсен министерствин хушăвĕпе килĕшӳллĕн ачасене тата пассажирсене турттарас ĕçри хăрушсăрлăха тивĕçтерес тĕллевпе декабрĕн 14–23-мĕшĕччен пирĕн районта та «Автобус» операци пырать. Çак операци вăхăтĕнче районти шалти ĕçсен пайĕн çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн сорудникĕсем пассажирсене турттаракан транспорта уйрăмах тимлĕ тĕрĕслеççĕ.

Кăçалхи 11 уйăхра, сăмахран, республикăра пĕтĕмĕшле автобуссем лекнĕ аварисенче (149 пулнă!) 16 çын вилнĕ, 250-шĕ суранланнă.

Операци вăхăтĕнче районти çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн сотрудникĕсен 7 административлă протокол çырма тиврĕ. Пассажирсене турттаракан автобуссем çынсене кирлĕ чухлинчен ытларах лартни тата водительсем хăрушсăрлăх пиçиххине çыхманни – тĕп сăлтавсем.

Автобус водителĕсен яваплăхĕ ытти транспортпа çӳрекенсенчен те пысăкраххине самантлăха та манмалла мар. Вĕсем йĕркене çирĕп пăхăнманнипе пассажирсен пурнăçĕ те хăрушлăха кĕрсе ӳкме пултарнине те манас марччĕ. Çул çинчи яваплăхпа тимлĕх пирки яланах асра тытасчĕ.

**В. ВОЛКОВ,**
**районти шалти ĕçсен пайĕн патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн пуçлăхĕ.**

# Мускавра та Юнкă çинчен калаçрĕç



***Тăван кĕтес, тăван тавралăх... Мĕнле юратмăн-ха ăна?***

***Юнкăри вăтам шкулта вĕренекен Лиза Шишкинăпа Маша Сытина Юнкă тăрăхĕн илемĕ çинчен Мускава çитсех калама пултарчĕç. Вĕсем Раççейри ачасен экологипе биологи центрĕирттерекен «Летопись добрых дел по сохранению природы» акци финалисчĕсем пулса тăчĕç. Ачасене тĕпчев ĕçĕнче хавхалантарса пыраканĕ – Татьяна Владимировна Ермакова. Вăл уроксенче биологи предмечĕпе кăна мар, экологипе те тарăн пĕлӳ пама тăрăшать. Вĕрентекен тăрăшнипех ĕнтĕ Машăпа Лиза декабрĕн 7–11-мĕшĕсенче Мускавра «Таса та сывă вăрманшăн!» ятпа хатĕрленĕ проекта хӳтĕлерĕç. Тăван шкула ачасем дипломсемпе медальсем илсе таврăнчĕç.***

**М. СЫТИНА,**
**Юнкă шкулĕн директор çумĕ.**

# Сыпайсен те хоккей курупки пулчĕ

Эрне кун, декабрĕн 24-мĕшĕнче, Сыпай ялĕнче хоккей курупкине уçаççĕ. Районти сумлă хăнасем кăна мар, Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкартан та килме палăртнă çак савăнăçлă мероприятие.

Пĕлтĕр кунта аслисем хавхалантарнипе, пулăшнипе ачасемпе çамрăксем пĕве çинчи пăра тасатса тăчĕç. Хоккейла сахал мар вылярĕç Сыпайсем. Район тата унăн тулашĕнчи ăмăртусене те хутшăнма пултарчĕç.

Кăçал вара ялта шкулпа юнашар хоккей курупкине тăвассипе çуллахи шăрăхра та, кĕрхи сивĕ те йĕпе çанталăкра та тăрăшрĕç. Кунта пурăнакан Александр Шишкин йĕркелесе пычĕ çак ĕçе. Унăн тӳпи пысăккине Сыпай шкул директорĕ В. Дашков уйрăммăн палăртать. Ачасемпе çамрăксене те çак ĕçе явăçтарма пултарнишĕн хĕпĕртенине пытармасть вăл. Вĕсемшĕн тăрăшаççĕ-çке кунта. Çакна кура пуçаруçăсене пулăшакансем татах пулнă. Ытларахăшĕ – предпринимательсем. Акă Владимир Любимовпа Георгий Яшков хăмасем парса пулăшнă, Алексей Ершов – тимĕр-тăмăр енчен, халĕ ав вылякансене хывăнса тумланмалли пӳлĕме ăшăтмалли кăмака та хатĕрлесе пĕтерет. Ольга Шишкина, Эдуард Баранов, Григорий Воронин тата ыттисем те пулăшнă. Шкулта вĕренекенсем вара çулла пĕр ĕç туса икĕ мулкачă тытнă тейĕн: çырмасенчи тимĕр-тăмăра пухса вĕсем курупка тума укçатенкĕ те ĕçлесе илнĕ, тавралăха та тирпей-илем кӳнĕ.

Ачасене хоккейла выляма формăпа тивĕçтерессине малтанлăха «Чуваштоппром» директорĕ Александр Федотов хăй çине илнĕ. Хапхана хӳтĕлекенĕн формипе хатĕр-хĕтĕрĕ (клюшкăсăр) хăй 20 пин тенкĕ ытла тăрать мĕн. Апла пулин те ентеш çамрăксен пуласлăхне мала хуни курăнать. Çĕнĕ Шупашкарти «Сокол» хоккей командин тренерĕ те пулăшу парсах тăрать. Ачасем унти пăр çинче пĕрре мар ярăннă, унти тренировкăсене пăхма та тӳлевсĕрех çӳренĕ.

Курупкана уçнă кун вара Сыпайсем хăнана Муркашри тата Юнкăри хоккеистсене те йыхравлаççĕ. Вăйăсем интереслĕ пулма шантараççĕ. Килсе курăр!

**Н. НИКОЛАЕВА.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления

**Парикмахерская «Шарм» ежедневно принимает волосы. Дорого. Ремонт стиральных машин-автоматов с выездом на дом. В д. Шатьмапоси открылась швейная мастерская. Принимаем заказы на ремонт и пошив одежды. Тел.: 8-953-010-21-34, 8-962-599-04-70. 2-2.**

* * *

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:190501:268, местоположение: участок находится примерно в 155 м. по направлению на юг от ориентира нежилое строение, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение, д. Демкино, ул. Суворова, д.36, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6150 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

* * *

В объявлении собственников земельных долей, о выделении земельного участка в счет земельной доли, о проведении собрания по согласованию местоположения границ, опубликованного в районной газете «Çĕнтерӳ ялавĕ» от 18 декабря 2010 года в №№ 106-107 (7848-7849), страница 5, в 3 колонке, 6 абзаце допущена опечатка, вместо «ул. 50 лет Октября, д. 4, офис ООО «Земля» следует читать «ул. Ленина, д. 41/5 офис ООО «Аршин».

* * *

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 10-10.**

* * *

**Ĕне, вăкăр, пăру туянатăп.**
**Тел.: 60-7-10, 8-905-343-60-63. 2-8.**

* * *

Я, собственник земельной доли Аргандеева Христина Ильинична, объявляю о выделении земельного участка в счет земельной доли площадью 13800 кв. м. пашни, расположенного на территории землепользования бывшего СХПК «Новая Юнга» Моргаушского района Чувашской Республики, Юнгинского сельского поселения, участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:080901.

Все претензии принимаются в течении месяца после выхода объявления в администрации Юнгинского сельского поселения.

Настоящим извещением уведомляем заинтересованных лиц, участников долевой собственности земельных долей единого земельного массива, расположенного на территории бывшего СХПК «Новая «Юнга» Моргаушского района Чувашской Республики, а земли собственников смежных земельных долей и участников, входящих в состав земель сельскохозяйственного назначения Моргаушского района ЧР, о проведении собрания по согласованию местоположения границ, выделяемой в счет земельной доли, расположенной по адресу: ЧР, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, в центральной части кадастрового квартала 21:17:080901.

Заказчик работ, собственник в праве общей долевой собственности на земельный участок гр. Аргандеева Христина Ильинична, проживающая по адресу: ЧР, Моргаушский район, с.Юнга. Паспорт серии 9702 № 622628 выдан Моргаушским РОВД Чувашской Республики от 09.07.2002 г.

Согласование местоположения границ состоится 22.01.2011 г. по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 офис ООО «Аршин» с 8 до 17 часов.

Возражения по проекту межевого плана и требования о проведении согласования местоположения границ земельного участка на местности необходимо направлять по адресу: 429530, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 офис ООО «Аршин».




БЫТОВАЯ ТЕХНИКА Лидер ГИПЕРМАРКЕТ ЭЛЕКТРОНИКИ

**Адрес: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4. Тел.: 62-3-80. 3-5.**

**Продаем доски хвойные 25х150мм, 50х150мм, 50х200мм; брус любого сечения. Цена договорная. Доставка по району бесплатно. Тел.: 8-903-346-40-58. 1-10.**

ООО “Фирма “Элис”
уведомляет
Рождественская акция*
в системе КонсультантПлюс
справки по телефонам: (8352) 62-35-15, 62-10-83
адрес: г. Чебоксары, ул. Нижегородская, д.4

**25 декабря с 8-00 до 16-00 часов Ульяновская обувная фабрика проводит выставку-продажу обуви из натуральной кожи Ульяновской, Беларусской фабрик и других российских производителей. 1-5.**

**Спутниковые антенны «ТРИКОЛОР» ТВ - 7000 руб. Кабель+крепежи - в подарок. Гарантия. Тел.: 8-906-385-29-30. 1-2.**

Çатракассинчи вăтам шкул коллективĕ кунта ачасене кĕвĕ-çемĕ вĕрентекен А. Г. Семеновăн ашшĕ

**Герман Ефимович**
**СЕМЕНОВ**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланса пĕлтерет.

**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учреждениĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Шапошников В.Л.
Пичете панă 21.12.2010 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4087.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.